25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ДЕКАБРЬ 2 ЮНКУН 280 (6215) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тракторсене хăвăрт тата лайăх пахалăхпа юсар

Иртнĕ çулта пирĕн республикăри хăшпĕр МТС-сем ремонт ĕçне кирлĕ пек туса пыман пирки, чылай тракторсем ĕçе вăхăтра тухаймарĕç, уйрăмах газогенераторлă тракторсем япăх ĕçлерĕç. Уборка ĕçĕсем пуçланнă тĕле Шăмăршă, Етĕрне тата Çĕрпÿ МТС-сен тракторĕсенчен 34 проценчĕ юсавлă пулман пирки ĕçе тухайман. Трактористсемпе трактористкăсем хăйсен ĕçне пысăк çĕкленÿпе туса пырса çак çитменлĕхе пĕтерме пултарчĕç, тырпулсене хăвăрт пуçтарса кĕртме колхозсене пулăшрĕç. Трактористсемпе комбайнерсен паттăр ĕçне пула кăçал пирĕн республика тракторсен вăйĕпе туллин усă курчĕ. Нумай МТС-сем хăйсен çулталăкри ĕçсен планне срокчен тултарчĕç, Елчĕк, Комсомольски тата Тăвай районĕсенчи МТС-сем авăн çапмалли плана та ирттерсе пурнăçларĕç.

1943 çул ялхуçалăхĕ умне тата пысăкрах задачăсем кăларса тăратать. Отечественнăй вăрçă ялхуçалăхĕнчен тырпулсен тухăçлăхне татах та ÿстерме ыйтать. Пирĕн колхозсем 1943 çулта пысăкрах тухăçлă тырпул, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсем туса илмелле. Çак задачăна пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре пирĕн машинно-тракторнăй станцисем пысăк вырăн йышăнмалла.

Тракторсемпе комбайнсен техникăллă юсавлăхĕ кăçалхи ĕçсенче кăштах чакрĕ. Çакă вăл МТС-сен тата МТМ-сен директорĕсене, инженерсемпе механиксене тракторсене юсас ĕçре кăçал пултаруллăн ĕçлеме хушать. Вĕсен ремонт ĕçне кăçал нихăçанхи пек мар организованно туса иртермелле, тракторсене юсас ĕçре вырăнти ресурссемпе туллин усă курмалла, вĕсене шыраса тупмалла, кашни трактора, машинăна срокра тата техника енчен лайăх юсама трактористсене мобилизацилемелле, пĕтĕм ĕçе график тăрăх туса пымалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ тракторсене тата ялхуçалăхĕнчи машинăсене пурне те 1943 çулти апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне; комбайнсене июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме палăртнă. МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсене ремонт ĕçĕнче иртнĕ çул тунă йăнăшсене кăçал тумалла марри çинчен асăрхаттарнă. Иртнĕ çул пирĕн хăшпĕр МТС-сем тракторсене юсас ĕçе çăмăл ремонтран пуçларĕç, капитальнăй ремонт ĕçне кая хăварчĕç, çавăнпа нумай тракторсене тĕплĕн юсаймарĕç.

Кăçал тракторсене юсас ĕçе капитальнăй ремонтран пуçлас пулать, ытларах хавшанă тракторсемпе машинăсене ремонта чи малтан тăратмалла. Вĕсен çĕмĕрĕлнĕ пайĕсене вырăнтах тунă çĕнĕ пайсемпе улăштармалла. Пуриншĕн те паллă, 1943 çулта пирĕн кашни трактора, ялхуçалăхĕнчи кашни машинăна çирĕп юсаса ĕçе кăлармалла. Çитес çулти çуракине вăхăтра хатĕрленсе тухас майпа пирĕн МТС-сен ремонт ыйтман машинăсемпе тракторсене те техника енчен пăхса тухмалла, вĕсен кăлтăкĕсене юсамалла, тасатса сĕрсе лартмалла. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем, МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсем, механикĕсем газогенераторлă тракторсене вăхăтра тата çирĕп юсаса лартассишĕн уйрăмах ответлă пулса тăраççĕ. Газогенераторлă кашни трактор килес çул ĕçре пулмалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсен, Çĕрĕç халăх комиссариачĕпе унăн политсекторĕн ремонт ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе ертсе пымалла. Пĕтĕм ĕçе пысăк йĕркелĕхпе организацилесе, тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсемпе инвентарьсене те 1943 çулти апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса çитермелле, колхозсен лаша кÿлмелли хатĕрсене, ялхуçалăх инвентарĕсемпе машинисене апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса çуракине хатĕр тытмалла.

ЧАССР Совнаркомĕ ремонт ĕçне кăтартуллăн йĕркелесе пыракан руководительсене премисем памалла турĕ: 1942 çулăн IV-мĕш кварталĕнче моторсемпе тракторсене юсас плана вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пурнăçланăшăн, çак вăхăтрах машинăсен запаслă пайĕсене çĕнĕрен тăвас е юсас ĕçĕн планне пурнăçланăшăн МТС директорне, старши механикне, ремонт тăвакан мастерскойăн директорне вĕсен икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ преми параççĕ, тракторсене тата моторсене юсамалли плана срокра тата лайăх пахалăхпа пурнăçланăшăн, 1942 çулти IV-мĕш, 1943-мĕш çулти 1-мĕш кварталсенче машинăсен запаслă пайĕсене тумалли плана тултарнăшăн та çавăн чухлĕ премии памалла тунă. Çакă вăл МТС-сен руководителĕсене, старши механиксене кăçал тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе лайăх организацилесе ирттерме, ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă хăвăртлăхпа туса пыма çĕклемелле.

Республикăри чылай МТС-сем тракторсене юсас ĕçе вăхăтра тытăнса анлăн туса пыраççĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илме кандидата палăртнипе хавхаланса, ремонт ĕçĕнчи рабочисем, трактористсем тракторсене юсас ĕçре социализмлă ăмăртăва татах та вăйлатрĕç. Ишлей МТС-ĕн 9-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ Ефимов юлташ) хăйĕн тракторĕсемпе машинисене ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерчĕ. МТС коллективĕ хăйĕн мĕншур тракторĕсене январĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса çитерессишĕн кĕрешет. Нумай трактористсем ĕç графикне ирттерсе тултараççĕ.

Чкаловски МТС-ĕн механически мастерскойĕнче тракторсене юсас ĕç икĕ сменăпа пулса пырать. 1942 çулăн IV-мĕш кварталĕнче МТС-ĕн пурĕ 20 трактора юсамалла пулсан, паянхи куна 15 трактора юсаса лартнă. Ремонт тăвакан бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, ĕç графикне нумайĕшĕ ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ.

Тракторсене юсас ĕçе Красноармейски МТС-ĕ те юлашки вăхăтра вăйлатрĕ. Коллектив IV-мĕш кварталта тумалли ĕç планне вăхăтра пурнăçлассишĕн тăрăшать. Паянхи куна бригадăсем 13 трактора ремонтран кăларнă, вăл шутран 4 трактора капитальнăй ремонт тунă. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене ремонтлас тĕлĕшпе республикăра Шăхасан, Куславкка, Ишлей МТС-сем малта пыраççĕ.

Анчах хăшпĕр МТС-сем ремонт ĕçне халĕ те кирлĕ пек йĕркелесе яман-ха. Шăмăршă, Первомайски, Сĕнтĕрвăрри МТС-сем ремонт тумалли плансене пурнăçласа пымаççĕ, машинăсен запаслă пайĕсене тăвас е юсаса çĕнетес ĕçе йĕркелемен. МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсен 1942 çулти IV-мĕш квартал планне пурнăçа кĕртес ĕçе организацилемелле. Ремонт ĕçĕнче кая юлса пыни пачах та пулмалла мар. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе большевикла йĕркелĕхпе, ĕçре социализмлă ăмăртăва анлăн сарса туса пымалла.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешÿ пуçланчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Чаканарти Тельман ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçалхи çул нихăçанхинчен те вăйлăрах ĕçлерĕç. Тĕштырăсене вĕсем 7 кун хушшинче çапса пуçтарчĕç.

Авăн çапнă çĕрте 45 колхозник кашни кунах 5 гектар тыррине çапса пынă. Колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ. Тăрăшса ĕçлекен колхозниксем А. Васильева, М. Петрова, В. Никитин, А. Иванова юлташсем 150 ĕçкунĕнчен пуçласа 275 ĕçкунĕ таран ĕçлесе тунă. Кăçал колхоз кашни ĕçкунĕ çине 2—3 килограмм тĕштырă валеçсе парать. Ĕçлеме пултаракан колхозниксем пурте ĕçкунĕсен минимумне тултарнă.

Халĕ колхоз тырпула ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленет. Страховка, вăрлăх тата фураж фончĕсене уйăрса хунă. Государствăна тырпул, сĕт-çу, çăмарта, аш-какай парас плансене срокчен тултарнă. Хĕрлĕ Çар фондне 17 центнер тырă хунă.

Нумаях пулмасть кунта колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Степанов юлташ колхозниксене Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладне ăнлантарса пачĕ. Колхозниксем аслă çулпуçăн докладне итленĕ хыççăн çитес çулхи çуракине лайăх хатĕрленме конкретнăй обязательствăсем илчĕç. 1943 çулта кашни гектартан ыраш 14 центнер, урпа 17 центнер, сĕлĕ 16 центнер, пăрça 14 центнер туса илессишĕн кĕрешме пулчĕç.

Халь колхозниксем ялхуçалăх инвентарĕсене пĕтĕмĕшпех пуçтарса лартнă, 5 плуга юсама параççĕ, 15 сÿре ĕçлеме юрăхлă, вĕсене типĕ сарая пуçтарса хунă. Вăрлăхсем таса тата типĕ амбарсенче. Çак кунсенче вĕсене иккĕмĕш хут триерпа сортлама тытăнаççĕ. Ку ĕçе тума 5 колхозникрен звено организациленĕ.

Çурхи тырăсем акмалли çĕре пĕтĕмĕшпех сухаласа хăварнă, унта тăкма пĕр пин лав тислĕк хатĕрленĕ. Калчасене çуркунне апат пама икĕ центнер кĕл, икĕ центнер ытларах кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлеме палăртнă.

С. ШАДИН.

Кадрсем хатĕрлетпĕр

КОМСОМОЛЬСКОЕ, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС 1943 çулта колхозсен уйхирĕсенче ĕçлеме механизаторла кадрсем хатĕрлес ĕçе тимлĕн туса пырать. Канашри механизаторла кадрсем вĕрентсе кăларакан шкула 7 çынна вĕренме янă. Октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа МТС-ра трактористсем хатĕрлекен курс уçнă. Курсра пурĕ 62 çын вĕренет, вĕсенчен 30-шĕ хĕрачасем.

КУДРЯВЦЕВ,
МТС-ăн старши механикĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче тата **Центральнăй** фронтра, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи енеллех наступлени туса пынă.

* * *

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 17 танкне, войскăсемпе тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 130 автомашинине çити тата боеприпассем тиенĕ 50 лавне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 2 батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн чаçсем противник çине персе тăнă. Хулан кăнтăр хĕрринче пирĕн войскăсем, активлăн кĕрешсе, гитлеровецсенчен темиçе дзотпа блиндажа тасатнă. Пĕр участокра нимĕç пехотин икĕ батальонĕ, 30 танкпа пĕрле пырса, пирĕн подразделенисене атакăлама хăтланнă. Çав çапăçура 200 салтакпа офицера çити тата 7 танк çухатсан, противник хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн Дон шывĕн хĕвелтухăç хĕрринчи оборонине шала кĕрсе кайса çапăçнă. Противникăн темиçе укреплениине тытса илнĕ, вĕсенче çÿремелли траншейăсем, дзотсем, танксене тата пехотăна чармалли чăрмавсем нумай пулнă. Нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 12 танк, 29 оруди тата 47 пулемет пĕтерсе тăкнă. Енер пирĕн чаçсем Вертячий ятлă тĕреклетнĕ пунктра нимĕçсенчен 17 танк, 5 оруди, 110 автомашина, 17 мотоцикл, 50 лав, амуници складне тата выльăх апачĕн складне тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сире-сире ярса, ăнăçлăн малалла куçса пынă. Кунка çапăçусенче тăшманăн 1.600 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 12 танк, 15 оруди, 14 миномет, 65 пулемет пĕтерсе тăкнă, 36 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ. Черный юлташ ертсе пыракан боецсем нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларнă, нимĕçсем çав пункта оборонăн тĕреклетнĕ узелĕ туса хунă пулнă. Пирĕн артиллерипе танксем тата пехота пĕрле пырса çапнине чăтаймасăр, противник, хĕçпăшалсемпе çар пурлăхне пăрахса хăварса, васкасах каялла чакнă. Халăх пурăнакан çав пунктăн урамĕсенче тăшманăн 300 вилли ытла выртнине шутласа кăларнă, унăн 3 орудине тата 42 пулеметне пĕтерсе тăкнă, çар пурлăхĕ хунă темиçе складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем, вăйлă наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă. Противник, оборонăн вăйлă тĕреклетнĕ узелĕсемпе усă курса, хăйĕн фронта пырса çитнĕ резервĕсене контратакăна ярать. Совет чаçĕсем çав контратакăсене сире-сире ярса тата малалла куçса пырса, нимĕçсене пысăк çухатусем тÿстереççĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсенчен тин çеç ирĕке кăларнă халăх пурăнакан пунктра тăшманăн 650 вилли тата çунса кайнă 7 танкĕ выртнине шутласа кăларнă. Противникран 6 оруди, 19 пулемет, боеприпассен складне, продовольстви складне тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противникăн пĕр дивизийĕн чаçĕсене пысăк поражени тÿстернĕ. Çапăçу хирĕнче темиçе çĕр нимĕç вилсе выртнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 16 орудине тата 6 танкне тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери çапăçу хирĕ тĕлĕнче нимĕçсен 4 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен поездне ÿпĕнтерсе янă. Крушение пула пĕр паровоз тата 25 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Чугунçулăн çав участокĕ тăрăх поездсем çÿресси вара икĕ талăка чарăнса тăнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет чаçĕсем нумаях пулмасть осетин ялне йышăнса илнĕ. Вĕсем гитлерла бандитсем çав яла оккупациленĕ вăхăтра унти мĕншур халăха çаратса пĕтернине пĕлнĕ. Гитлеровецсем килрен-киле çÿресе продовольстви, тумтирсем тата кăшт та пулин хаклăрах япаласене пурне те туртса илнĕ. Çынсене вăрă-хурахла çаратнипе пĕрлех вĕсем стариксемпе хĕрарăмсене мăшкăлланă. Бандитсем Костылевăпа Кокоева колхозницăсене шомпăлсемпе хĕнесе тăкнă. 70 çулхи колхозник Салтанов гитлеровецсем хĕненине чăтаймасăр вилнĕ. Колхоз витин ишĕлчĕкĕсем айĕнче пирĕн боецсем тыткăна лекнĕ 36 красноармеецăн касса-çуркаласа пĕтернĕ виллисене тупнă. Çакна палăртнă: нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем çав тыткăна лекнĕ красноармеецсене асаплантарнă, унтан вара вĕсене персе пăрахнă.

* * *

Нимĕç хаçачĕсем «вăрçă пирки тарăхакан тата вăрçăра Германия çĕнтерессине ĕненмен» çынсене арестлени çинчен тата перс-пере вĕлерни çинчен пĕлтереççĕ.

Лейпцигра эсэсовецсемпе полици 130 рабочие арестленĕ. Дрезденра «хальхи йĕркесем пирки тарăхакан çынсемпе кĕрешес ĕçре нимĕн те туманшăн» фашистла чиновниксен пысăк ушкăнне вырăнтан кăларнă тата тытса хупнă. Гитлеровецсем ют çĕршыв рабочийĕсене те хытăрах тыткала пуçланă. Берлинри пĕр çар заводĕнче вĕсем ĕç нормине тултарайман 80 итальянецпа французa тытса хупнă.

Декабрĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи енеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин кăнтăр пайĕнче пирĕн войскăсем противникăн умлăн хыçлăн тунă темиçе атакине сирсе янă. Çав çапăçура гитлеровецсен 300 салтакпа офицер таран вилнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем гитлеровецсене 8 дзотпа блиндажран хăваласа кăларнă. Пирĕн артиллерипе минометсем противникăн 27 огневой точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ операцисем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн тĕреклетнĕ пунктне йышăнса илнĕ, 250 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тăшманăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ, 4 танкне çунтарса янă. 5 оруди, 7 миномет, 11 пулемет тата 21 автомашина тытса илнĕ. Тепĕр участокра, артиллерипе минометсенчен персе, пирĕн чаçсене атакăлама хăтланнă противникăн танкĕсемпе пехотине сапаласа янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çапăçса малалла куçса пынă. Противник, халăх пурăнакан пунктсенче тĕрекленсе ларса, совет войскисене малалла куçса пыма чарасшăн, анчах та пирĕн артиллерипе танксем тата пехотăпа кавалерин хăвăрт куçса çÿрекен отрядĕсем пыра-пыра çапнипе унăн кăнтăр-хĕвеланăçнелле чакма тивет. Халăх пурăнакан икĕ пункт районĕнче пирĕн чаçсем çĕркаçа противникăн 700 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 16 оруди, 39 пулемет тата 43 автомашина пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн кавалеристсем 50 автомашинăна тата çар пурлăхĕ тиенĕ пысăк обоза тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем оборонăн тĕреклетнĕ пункчĕ туса хунă кашни ялшăн вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Пĕр участокра пирĕн соединени противникăн танковăй тата стрелковăй полкĕсен штабĕсене аркатса тăкнă. Çав çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан К. пункчĕ патĕнче нимĕçсен 6 танкĕ тата автоматчикĕсен пысăк ушкăнĕ старши лейтенантăн Назаровăн подразделенине атакăланă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, пирĕннисем нимĕç автоматчикĕсене танксенчен уйăрса илнĕ. Вара нимĕçсем, çапăçу хирне 3 çĕмĕрĕк танк тата нумай вилĕ пăрахса хăварса, хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакса кайнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе çапăçса 50 гитлеровеца вĕлернĕ. Чĕрĕ юлнă карательсем тарнă. Темиçе кун иртсен, çав партизансем противникăн халăх пурăнакан пĕр пунктри гарнизонне тапăннă та нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 100 çынна ытла вĕлернĕ. Партизансем гитлеровецсен халăхран çаратса илнĕ продовольстви складне тытса илнĕ. Çав продовольствине вара çывăхри ялсенчи колхозниксене каялла тавăрса панă.

* * *

Нимĕçсен 376-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ радист унтер-офицер Зигфрид Шауфельд çапла каласа панă: «Вырăссем Сталинград районĕнче наступлени пуçласа яни пуриншĕн те кĕтмен çĕртен сиксе тухнă япала пулса тăчĕ. Кунтан тĕлĕнмелли те çук. Эпир виçĕ уйăх хушшинче Сталинград парăнасса кунран кун кĕтсе пурăннă. Ноябрь уйăхĕнче Гитлертан çĕнĕ приказ килчĕ, унта вăл Сталинграда кирек мĕн пулсан та тытса илме тата войскăсене хĕллехи хваттерсем тупса пама хушнă. Çавна тусассăн пире нумайлăха канма ярĕç тесе шутлаттăмăр эпир. Эпĕ вырăссем пирĕн укреплениcене татни çинчен калакан малтанхи радиограммăсене илсен, штабра çав хыпара ĕненмерĕç. Мана ун çинчен пирĕн оборонăн малти хĕррине хÿтĕленĕ чаçсенчен ыйтса пĕлме хушрĕç, анчах та ку ĕç кая юлчĕ иккен—пире хирĕç никам та чĕнмерĕ. Пăртак каярахпа эпир кÿршĕри дивизисенчен сехре хăпартакан темиçе радиограмма илтĕмĕр. Çĕрле вырăссен малти отрячĕсем пире хăваласа çитрĕç те пирĕн радиостанцие тытса илчĕç, мана тыткăна илчĕç».

Финанс планне тултарассишĕн

КÿКЕÇ. Шупашкар районĕнчи финанс работникĕсем Сталин юлташ 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада сÿтсе-явнă хыççăн IV-мĕш кварталти финанс планне декабрĕн 5-мĕшĕ—Конституци кунĕ тĕлне 100 процентпах тултарма обязательство илчĕç. Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кашни работник тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕ. Чылай работниксем хăйсен участокĕ тăрăх финанс планне тултарчĕç те ĕнтĕ. Хыркасси ялсоветĕнчи финагент Ефимова юлташ, Чăкăр ялсоветĕнчи—Миронов, Ойкасси ялсоветĕнчи—Игнатьева, Çĕньял ялсоветĕнчи—Иванова юлташсем хăйсен ялсоветĕсем тăрăх финанс планне ноябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне 100 процентпах тултарчĕç. Вĕсем колхозниксем хушшинче ăнлантаруллă ĕçе кулленех туса пыраççĕ. Укса татман çынсем патне килĕрен çÿреççĕ, вĕсемпе калаçаççĕ.

Райфинотдел финанс работникĕсемпе час-часах семинарсем, канашлусем иртерет. Унта договор мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслеççĕ. Уйрăм работниксен ĕçне пăхса тухаççĕ, опытпа паллашаççĕ, начар ĕçлекенсене критиклеççĕ. Кашни работникăн ĕçне пĕтĕçтерсе тухаççĕ. Çапла туни ноябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне районăн IV-мĕш кварталти финанс планне 82 процент тултарма май пачĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

С. М. Киров çинчен—докладсем

ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕ С. М. Кирова вĕлернĕренпе сакăр çул тултарнă майпа районри учрежденисемпе колхозсене докладчиксем уйăрса янă. Гусев юлташ МТС работникĕсем патĕнче, Алексеев юлташ пир-авăр тĕртекен фабрикăри рабочисем хушшинче докладсем туса пачĕç. Çавăн пек райком бюровĕн членĕ Ефимов юлташ хатĕрлев аппаратĕнче ĕçлекен работниксем хушшинче тата районри военнăй отдел заведующийĕ всевобуч боецĕсем хушшинче докладсем ирттерчĕç.

С. ИВАНОВ

ĔÇЛЕМЕН МАШИНĂСЕНЕ ĔÇЕ ЯЧĔÇ

ЭЛĔК. Сăс-кантăр заводĕнчи рабочисемпе работницăсем, Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн, малашне мĕнле ĕçлемеллине палăртса хăварчĕç. Вăрăм сÿс тăвакан агрегатпа ĕçлекенсем ноябрь уйăхĕнчи плана 110 процент тултарма обязательство илчĕç. Вĕсем çумне ытти цехсем те хутшăнчĕç.

Механически цехра пĕр машина запаслă пайсем çук пирки уйăх ытла ĕçлемесĕр ларнă. Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн цехри рабочисем, 20 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлесе, çав машинăна ĕçе ячĕç. Васкавлă заказсем туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен работницăсем октябрь уйăхĕнчи плана 175 процент тултарнă. Вĕсем ноябрь уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарас тĕлĕшпе те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. В. Николаева, Е. Бармина, К. Николаева тата ытти работницăсем те нормăна 150—180 процент тултарса пыраççĕ.

Л. НИКОЛАЕВА.

Ĕççыннисемпе Хĕрлĕ Çар валли пир-авăр

Шупашкарти пир-авăр фабрики ноябрьте октябрьтинчен 15 процент чухлĕ пысăкрах планпа ĕçлерĕ. Çапах та фабрика уйăхри плана срокчен 1 кун малтан тултарчĕ, ноябрĕн 30-мĕшĕнче заданирен ирттерсе продукци туса кăларчĕ.

Çулпуç сăмахĕсемпе хавхаланса тата Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, фабрика коллективĕ иртнĕ уйăхра ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕ. Чылай работницăсем нормăна ăнăçлăн тултарса тата нормăран ирттерсе ĕçлеме пуçларĕç. Стахановкăсем Николаева, Андреева, Лейферова юлташсем кунран кун нумайрах тата лайăхрах продукци туса кăлараççĕ. Бригадир Люблинская, браковщица Кирсель тата столяр Алексеева юлташсем ĕçре дисциплинăпа йĕркелĕх кăтартаççĕ. Рутманпа Чинаев мастерсем хăйсен участокĕсенчи ĕçе тĕрĕс организацилесе пултаруллă ертсе пыраççĕ.

Пĕтĕм коллектив пĕр çын пек пулса ĕçлеме пуçланă май, фабрика ноябрьти задание пур изделисем тăрăх та тенĕ пекех тултарнă. Пĕр питех те кирлĕ издели тăрăх задание ирттерсе тултарнă. Туса кăларнă продукцин пахалăхĕ заданипе палăртнинчен лайăхрах.

Фабрикăн ертсе пыракан работникĕсем юлашки вăхăтра производствăран юлнă япаласенчен ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине организациленĕ. Ноябрь уйăхĕнче фабрика коллективĕ ку енĕпе те пысăк ĕçсем тунă: производствăран юлнă япаласенчен хуçалăхра кашни кун кирлĕ таварсене сахал мар туса кăларнă. Коллектив çавăн пек таварсене ноябрь уйăхĕнче туса кăларас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртнĕ.

Ноябрьте тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе хăварса, фабрикăри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем 1942 çулăн юлашки уйăхĕнче татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

ÇУЛПУÇĂН ДОКЛАЧĔ ÇИНЕ ОТВЕТЛЕСЕ

Шупашкарти макарон фабрики ноябрь уйăхĕнче продукци туса кăлармалли плана 108 процент тултарчĕ. Иртнĕ уйăхра пирĕн рабочисем, Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пычĕç. Стахановкăсем Денисовăпа Лукоянова юлташсем уйăхри нормăна 310 процент, Тарасовăпа Яковлева—276 процент, Терушинăпа Архипова 239 процент тултарчĕç. Сергеевăпа Афанасьева работницăсен ĕç тухăçлăхĕ те нормăпа пăхнинчен 2 хут пысăкрах. Упаковщицăсен Полынова ертсе пыракан бригади те ноябрьте нормăна 1,5 хут ирттерсе тултарчĕ. Çавăн пек лайăх ĕçлекен работницăсен хисепĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать.

Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, фабрика коллективĕ 4-мĕш кварталти плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарма пулчĕ.

Б. СТОЛЯРОВ,
Фабрика директорĕ.

КОМБИНАТĂН ÇИТĔНĔВĔСЕМ

Республикăри апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсенчен Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Е. Люминарская юлташ) лайăх ĕçлет. Вăл хăйĕн производство программине кашни уйăхрах ирттерсе тултарать. Апат-çимĕç продукчĕсем туса кăлармалли плана вăл сентябрь уйăхĕнче 121 процент, октябрьте—125 процент, ноябрьте—170 процент тултарчĕ. Иртнĕ уйăхра планран ирттерсе 17 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Комбинат плана çавăн пек ăнăçлă тултарса пыни унăн коллективĕ тăрăшса ĕçленинчен килет. Комбинатри работницăсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ, ĕççыннисем валли продукцисем ытларах туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Ăмăртура конфеткăсем тăвакан цехри К. Попова, А. Стрелкова тата Вдовина юлташсем малта пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕç нормисене кашни уйăхрах 120—130 процентран кая мар тултараççĕ.

Арман коллективĕн çитĕнĕвĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Механически арман коллективĕ çак çулта хăйне панă заданисене ирттерсе тултарса пырать. Коллективăн кăçал 382,5 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла. Вăл 10 уйăх хушшинче 367,3 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларса, плана 91,6 процент тултарчĕ. Малтанлăха шутланă тăрăх, арман коллективĕ çулталăк планне çак кунсенче вĕçлет. Уйрăм продукцисем енĕпе вăл плана тултарчĕ те ĕнтĕ. Сăмахран, ыраш авăртмалли плана 100,9 процент тултарчĕ.

Коллективра Курасовпа Бетрендик юлташсем малта пыраççĕ. Вĕсем хăйсене панă заданисене кашни уйăхрах 160 процент таран тултараççĕ.

Х. ЛИСИН.

Çирĕмкунлăхра тунă çитĕнӳсене çирĕплетер

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра районри 51 колхозран 23-шĕ авăн çапса пĕтерчĕç. Пурĕ 10.981 гектар çинчи тырра çапса, район авăн çапмалли плана 96 процент тултарчĕ. Иртнĕ çулсенче ĕçре яланах кайра пынă колхозсем кăçал нумай хут лайăхрах ĕçлени курăнать. Полянкăри Киров ячĕпе тăракан колхоз фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра 1.010 гектар çинчи тырпула йăлтах çапса пуçтарчĕ. Колхоз председателĕ Маслов юлташ ĕçе большевикла ертсе пынине кăтартрĕ. Çавăн пекех Париж Коммуни ячĕпе тăракан колхозра 599 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарчĕ.

Паянхи куна районĕпе çапса пуçтармалли тырă тата 560 гектар юлчĕ. Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра тунă çитĕнӳсене çирĕплетмелле, юлнă тырра çывăх кунсенчех çапса пуçтармалла. Енер районра колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсен пуххи пулса иртрĕ. Колхоз активĕ мĕнпур юлнă тырпула декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне çапса пуçтарма обязательство илчĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ çак ĕçе организацилесе ертсе пыма районри актива тепĕр хут колхозсене ячĕ. Çакăнта пĕрлех юлса пыракан колхозсене пулăшас ĕçе организацилетпĕр.

Хулари 17-мĕш Партсъезд ячĕпе тăракан колхоза пулăшма комбайн куçартăмăр. Иваньковăри «Путь к социализму» колхоза «МК—1100» маркăллă молотилка куçарнă.

А. СОМОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе научнăй конференци пулса иртет

СССР Наркомземĕн директиви тăрăх, наука учрежденийĕсен ялхуçалăх енĕпе тунă çитĕнĕвĕсене ĕçе кĕртес тĕлĕшпе декабрь уйăхĕнче Шупашкарта Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнче научнăй конференци пулса иртет. Конференцире ялхуçалăх ыйтăвĕсене тĕпчекен учрежденисенче тата опытлă станцисенче ĕçлекен специалистсем пулаççĕ, кунсăр пуçне конференци ĕçне хутшăнма ялхуçалăхĕпе интересленекен наркоматсемпе хуçалăх организацисене, специалистсене тата ялхуçалăхĕнче малта пыракан колхозниксене чĕнеççĕ.

Конференцире итлеме тăратнă доклад сенчен çаксене палăртмалла: «Чăваш республикинче сахăр кăшманне лартса ӳстересси» çинчен профессор Л. А. Пельцих, «Кок-сагыз культури Чăваш республикинче» темăпа доцент Воробьев, «Тракторсен ĕç тухăçлăхне ӳстересси» çинчен доцент А. В. Тарчевский, «Чăваш республикинче пурçăн тăвас ĕçе сарасси» çинчен доцент Н. С. Тураев юлташсен доклачĕсене итлеççĕ.

Конференцире ялхуçалăх науки тупнă çĕнĕ майсем пурнăçа кĕрсе пынине кăтартакан выставка уçăлмалла.

К. НАУМОВ,
Чăвашсен ялхуçалăх институтĕн доценчĕ.

Икĕ эрне хушшинче 90 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Пирĕн войскăсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăйлă наступлени туса пыни Албахтинăри «Партизан» колхозăн членĕсене çĕнĕ вăйпа ĕçлеме хавхалантарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем халь колхоз производствинче тата вăйлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Колхоз авăн çапас ĕçе кунĕн-çĕрĕн туса пырса, пĕтĕм тырпулсене икĕ эрне хушшинче çапса пуçтарчĕ. И. Тарасова, М. Николаева юлташсем ертсе пыракан бригадăсем уйрăмах стахановла тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Нумай колхозниксем тăрăшса ĕçлесе, стахановецсен ретне тăчĕç. Е. Егорова юлташ авăн çапнă çĕрте барабанщик пулса ĕçлерĕ, 14 кун хушшинче вăл 40 ĕçкунĕ ĕçлесе турĕ. 68 çулхи А. Захаров колхозник, машина патне кĕлте турттарса тăрса, çак икĕ эрне хушшинче 90 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Вăл вунă уйăх хушшинче кăçал 193 ĕçкунĕ тунă. Çапла вăл кăçал 30 пăта яхăн тĕштырă илет. Е. Кондратьева, В. Андреева тата ытти нумай колхозницăсем те питĕ лайăх ĕçлерĕç.

Ялти учительсем Мартыновпа Петров юлташсем Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене колхозниксене ăнлантара-ăнлантара параççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ докладне кашни колхозник патнех çитерне, тĕплĕн ăнлантарнă.

Халĕ колхоз государствăна тырă парса татрĕ. Хĕрлĕ Çарăн фондне 79 центнер тĕштырă хыврĕ.

С. ШАДИН.

Хастарлăн ĕçлеççĕ

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Юманлăхри Буденный ячĕпе тăракан колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри пулса тăрать. Иртнĕ çулта колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене февраль уйăхĕнче тин вĕçленĕ. Кăçалхи çул колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене иртнĕ çулхинчен 4 уйăх маларах вĕçленĕ. Тырăсене 6—7 кунта вырса пуçтарнă, октябрь уйăхĕнчех çапса пĕтернĕ. Авăн çапнă çĕрте колхозри пĕрремĕш бригада малти вырăна тухнă. Ку бригадăна фронтран таврăннă комсомолец К. Никитин юлташ ертсе пырать. Авăн çапнă çĕрте В. Семенова, М. Ильина, Ф. Уткин лайăх ĕçленĕ. Вĕсем кашниех 200—300 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Бригада кашни гектартан 21,20 центнер пăрçа туса илнĕ. Ыраш, сĕлĕ тата ытти культурăсем те пысăк тухăçлă пулнă. Колхозри иккĕмĕш бригада та начар мар ĕçленĕ. Виçĕ гектартан 12 пин çурăм кантăр туса илнĕ. Кантăр çурăмĕсен тăршшĕ 1,5 метр.

Колхоз государство умĕнчи парăмсене пурне те срокчченех парса татнă. Ашкакай, сĕт-çу памалли обязательствăсене тултарнă хыççăнах 1943 çулшăн та нумай тырă панă. Хĕрлĕ Çар фондне 52 центнер, оборона фондне 3 центнер тырă хунă. Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 14 гектар акса хăварнă.

Халĕ колхоз çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Вăрлăхсене хатĕрленĕ. Фураж, страховка, вăрлăх фончĕсене çителĕклĕ таран уйăрса хунă. Плугсене пурне те пĕр сарайне пуçтарса хунă, тасатса, çу сĕрсе лартнă. Сеялкăсене тасатнă, сошникĕсене кăларса, ăшне ыраш тултарса, ăшă вырăна пуçтарса хунă. Жнейкăсен сĕççисене кăларса çу сĕрсе хунă. Килес çул çурхи тырăсем акмалли 86 гектара сухаласа хăварнă. Вăл вырăна халь тислĕк кăлараççĕ. Кашни кун уя 10 лав тислĕк тухать. Паянхи кун тĕлне пурĕ 650 лав тислĕк кăларнă. Кусемсĕр пуçне, колхозниксем уйра юр тытса хăварма хатĕрленеççĕ.

Кăçалхи çул колхозниксем пархатарлă ĕçшĕн пысăк тупăш илеççĕ. Колхоз кашни ĕçкунĕ çине вăтамран 3 килограмм тĕштырă валеçсе парать. Çапла вара нумай ĕçкунĕ тунă колхозниксем Н. Евграфов, И. Григорьев, А. Матвеев тата ыттисем те 150—180-шар пăт тĕштырă илеççĕ.

Хальхи вăхăтра колхозниксем клевер вăррине тĕшлеççĕ. Çак ĕçе тума клеверотерка кирлĕ пулнă. Колхозăн вăл машина пулман. Колхоз бригадирĕсем К. Никитин, А. Семенов юлташсем 4 лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăна клевер вăрри тĕшлеме майлаштарнă.

Кахалсене ответ тыттармалла

КУСЛАВККА, ноябрĕн 30-мĕшĕ. Районри «Кзыл кучь», «Новый путь» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тырпулсен 60 процентне çеç çапса пуçтарнă. Ĕç çакăн пек кая юлса пынин сăлтавĕ— колхозсен учет ĕçне арпаштарса янинче. Учет ĕçне япăх туса пыни колхозниксене шутсăрах тарăхтарать. Тăрăшса ĕçлетĕн-и, е сулланса çӳретĕн-и,—çакă çав колхозсемшĕн пурпĕрех. Колхозниксен ĕçкунĕсене шута илсе пымаççĕ.

«Новый путь», «Кзыл кучь» колхозсенче, акă, 3—4 уйăх хушши ĕнтĕ колхозниксене вĕсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене çырса паман. Тырăсене учета илмеççĕ, колхоз кладовщикĕсен, хуçалăха ертсе пыракан руководительсен ĕçĕнче йĕркелĕх çук.

Партин 16-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра та (председателĕ Г. Иванов) учет ĕçĕ саланса кайнă. Ревизи комиссийĕнче тахçанах закон тăрăх ответ тыттарма тивĕçлĕ кахалсем ларaççĕ. Анчах учет ĕçĕнче йĕркелĕх туман. Колхозăн склачĕсене çĕнĕ тырă кĕчĕ, анчах вĕсенче унччен мĕн чухлĕ тырă пулни паллă мар. Хăçанччен тăсăлмалла тата çак ревизи? Кахалсене мĕншĕн ответ тыттармаççĕ? Çавăн пекех «Ударник» колхозра та, Кунта 1941 çулшăн та ревизи туман. Ревизи комиссийĕн председателĕ Юдин колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене мĕнле шута илсе пынипе интересленмест. Колхозăн кăçалхи тупăшне шута илме тăрăшмасть.

Ялхуçалăх çулĕ вĕçленсе пырать. Çулталăкри ĕçсем çинчен отчет тума халех тытăнмалла. Учет ĕçĕнче большевикла йĕркелĕх тумалла.

И. ШАРКОВ.

ХАЛĂХА ВĂРÇĂ ĔÇНЕ ВĔРЕНТЕССИНЕ—ÇӲЛĔ ПУСĂМА!

Халăха вăрçă ĕçне обязательнăй йĕркепе вĕрентни Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕ резервсем хатĕрлеме пулăшать. Кам паян тылра ĕçлет, тăван çĕршыв ăна ыранах вăрçа чĕнме пултарать. «Пирĕн çĕршывра фронта пулăшма резервсем хатĕрлесси пĕр минутăлăха та ан чарăнтăр. Урса кайнă тăшмана çапса салатма фронта çĕнĕрен те çĕнĕ войскăсем пырса тăччăр» — тет Сталин юлташ. Тăшмана çапса салатас пулсан, Хĕрлĕ Çара лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ, дисциплинăллă боецсем парса тăрас пулать.

Вăрçă ĕçне обязательнăй йĕркепе вĕрентме пуçланăранпа пирĕн республикăри çĕршер, пиншер граждансем вăрçă ĕçне вĕренчĕç, чи лайăх пулеметчиксем, автоматчиксем, минометчиксем, танксемпе кĕрешекенсем, бронебойщиксем, подрывниксем пулса тухрĕç. Виççĕмĕш черетпе вĕреннисем испытанисенче программа материалне лайăх ăнланнине, йывăр обстоятельствăсенче хăйсене тытма пĕлнине кăтартаççĕ. Вĕренекенсен 63 процентĕ вĕренӳ материалне «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пĕтернĕ. Командирсем пулма запасра тăракан командирсене тата отечественнăй вăрçă участникĕсене явăçтарнă. Вĕсем вĕренекенсене нимĕç фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă опычĕсемпе паллаштараççĕ. Вĕренӳ методикине боецсене лайăх ăнланмалла организацилес енĕпе, материала ăнланмалла туса йĕркелес енĕпе Шăхасан, Первомайски, Советски районсем тата Шупашкар хули малта тăраççĕ. Вăрçă ĕçне вĕрентессине военкоматсем çеç мар, парти, комсомол, совет тата ытти общественăллă организацисем те хакланă çĕрте вăл ĕç ăнăçлăн пулса пырать.

Анчах парти, комсомол, совет тата общественăллă организацисем, учреждени семпе предприятисен руководителĕсем чылай чухне вăрçă ĕçне вĕрентесси çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Шелухин директор пулса ертсе пыракан заводри вăрçă ĕçне вĕренекен рабочисем хăшпĕр кунсенче занятине 35 процент таран пымаççĕ. Çакăн пекех Поздняков юлташ директор пулса тăракан заводри вăрçă ĕçне вĕренекен рабочисем те занятисене начар çӳреççĕ. Çĕмĕрле районĕнче виççĕмĕш черетпе вĕренме пуçăнас умĕн командирнăй составпа инструкциллĕ занятисем ирттермен. Халĕ те çавăн пекех, кашни заняти пуçланас умĕн инструкци пулмалла пулсан, ăна туса ирттермеççĕ. Тактикăллă занятисем ирттернĕ чухне вĕренекенсен 75 проценчĕ кăна винтовка макечĕсемпе усă курнă, сапернăй кĕреçесем вĕренекенсен 40 проценчĕ валли кăна çителĕклĕ пулнă. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хăйĕн решенийĕнче çав предприятисен руководителĕсем вăрçă ĕçне вĕрентессишĕн, вĕренӳ программине пурнăçлассишĕн военкоматпа танах ответлă пулнине астутарса хăварчĕ. Дисциплина — çарăн вăй-хăвачĕ пулса тăрать. Вăрçă ĕçне вĕреннĕ чухне йĕркене пăхăнманни, итлеменни пулмалла мар. Занятие пĕр сăлтавсăр пыманнине е кая юлса пынине парти, комсомол, профсоюз пухăвĕсенче сӳтсе явмалла.

Вăрçă ĕçне вĕрентессин ăнăçлăхĕ агитациллĕ-массăллă ĕçе мĕнле туса пынинчен килет. Вĕренекене политика енĕпе вĕрентсе хатĕрлесси вăрçă ĕçне вĕрентессипе уйăрăлми çыхăнса тăрать. Парти, комсомол организацийĕсен вăрçă ĕçне вĕрентессине ертсе пымалла. ВКП(б) райкомĕсемпе ВЛКСМ райкомĕсен политруксене, политрук заместителĕсене инструкцисем памалла. Коммунистсемпе комсомолецсен вăрçă ĕçне лайăх вĕренес çĕрте социализмлă ăмăртăва пуçарса яракансем пулмалла.

Коммунистсемпе комсомолецсен тивĕçлĕ организованноçăн, дисциплинăллă пулнин пысăк тĕслĕхне, командирсемпе политработниксен приказĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçланин тĕслĕхне кăтартмалла. Шупашкар, Калинински районсенче боецсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва ячĕшĕн çеç туса пыраççĕ, социализмлă ăмăрту итогĕсене боецсене пĕлтермеççĕ, боевой листоксене вăхăтра кăлармаççĕ. Вĕренӳ пункчĕсенче нагляднăй пособисем çук. Хăш чух тата уйăрса лартнă политработниксем хăйсем политинформаци е политзаняти ирттернĕ чух çеç боецсем хушшинче пулма тăрăшаççĕ. Красноармейски районра Николаев политрук вĕренӳ пунктне 5 кун кая юлса пынă. Вĕренӳ пункчĕсенче агитациллĕ-массăллă ĕç начар пулса пынă пирки комсомол йышĕ те питĕ вăраххăн ӳсет. Вĕренекенсем хушшинче комсомолецсем питех те сахал. ВЛКСМ райкомĕсен хăшпĕр секретарĕсем вăрçă ĕçне вĕренмелли пунктсенче комсомол йышне ӳстерес пирки нимĕн те туман. Агитациллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ вырăна лартса чи лайăх çамрăксене комсомол ретне хутшăнтармалла.

Материала вĕренекенсем тарăнрах ăнланасси вĕренмелли тата усă курма юрăхлă хĕçпăшалсем çителĕклинчен нумай килет, анчах та ВЛКСМ Калинински, Тăвай, Елчĕк, Вăрмар райкомĕсем винтовка макечĕсене, гранатăсене, штыкпа çапăçма вĕреннĕ чух кирлĕ пулакан чучелăсене хатĕрлемен.

Пăшал тытма пултаракан рабочисене, колхозниксене, служащисене пурне те вăрçă ĕçне вĕренес çĕре хутшăнтармалла; вĕсенчен Ленин — Сталин партине чĕререн парăннă воинсем хатĕрлемелле. Хурçă пек çирĕп дисциплина, командирсен приказне пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама пултарни, вăрçă ĕçĕн ăсталăхне питĕ лайăх пĕлсе тăни,—çакăн пек боецсем хатĕрлемелле пирĕн, çакна ĕнтĕ парти, комсомол организацийĕсен тумалла. Халĕ, пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче нимĕç варварĕсене çĕмĕрнĕ чухне, вĕренӳ пункчĕсенче Хĕрлĕ Çар валли пысăк пĕлӳллĕ кадрсем хатĕрлессине хăвăртлатмалла. Вĕренӳ пункчĕсенче Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарас уяв ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса ямалла. Вăрçă ĕçне вĕренекен кашни боецăн хăй умне çĕршыва хӳтĕлекен паттăр боец пулас, хĕçпăшалпа тивĕçлипе усă курма пĕлекен боец пулас задача лартмалла, çакна пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшмалла.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

ЧЕРЧИЛЛЬ РАДИО ТĂРĂХ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 29-мĕшĕнче каçхине радио тăрăх тухса каласа, Черчилль çакна паллă тунă:

«Икĕ эрне каярах пирĕн чиркӳ чанĕсем Эль-Аламейн патĕнчи çĕнтерӳ ячĕпе янраса илчĕç, çав вăхăтран пуçласа событисем лайăх еннелле аталанса пычĕç. 8-мĕш арми 650 километра яхăн малалла кайрĕ, противникăн аркатса тăкнă вăйĕсене хăваласа пычĕ. Çав вăйсемпе усă курса, Роммель мухтанса каланă тăрăх тата Гитлерпа Муссолини шухăшĕпе, пĕтĕм Египета çĕнтерсе илмелле пулнă. Триполитани патĕнче иккĕмĕш пысăк çапăçу пулса иртессине кĕтме пулать.

1.600 километр хĕвеланăçнерехре Африкăн тепĕр вĕçĕнче, питех те анлă вырăнта Америкăпа Англи пĕрле пуçласа янă ĕçсем те çавтери ăнăçлăн пулса иртрĕç.

Хальхи вăхăтра Британи çарĕ нимĕçсемпе итальянецсем çирĕпленсе ларнă Тунисри юлашки районсене вăйлăн пыра-пыра çапать. Америкăпа Англин тата французсен войскисем, çума-çумăн тăрса кĕрешсе, хăвăрт малалла пыраççĕ.

Эпĕ Африкăн 3.200 километрлă çыранĕ çинчен каларăм. Эпир килес çывăх вăхăтрах противника çав пĕтĕм çыранран хăваласа кăларма шутлатпăр тата çавна шанса тăратпăр. Африка—чарăнса тăмалли вырăн мар. Африка—çирĕп позици мар, трамплин кăна. Эпир противник патне тачăрах çывхарса пырас тесе Африкăпа усă курăпăр.

Добрая Надежда сăмсахĕ патне каймасăр çула кĕскетес тесен, çар транспорчĕ валли Вăтаçĕр Тинĕсне уçни пирĕншĕн мĕнле вырăн йышăнса тăнине кирек кам та ăнланма пултарать. Эпир çĕнĕ фронтра сывлăшри çапăçусене те пуçарса яратпăр. Хĕн куракан тĕнчене çăмăллăх кӳрес тесе, сывлăшри çапăçăва май пур таранах вăйлатас пулать. Германи авиацийĕ хавшаса пырать ĕнтĕ. Çухатнă самолетсем вырăнне çĕнĕ самолетсем туса çитереймест. Чи лайăх самолетсен хисепĕ пĕчĕкленет, вĕсен пахалăхĕ начарланать.

Англин, Америкăн тата Российăн сывлăшри вăйĕсем пĕрле илсен халех ĕнтĕ Германи вăйĕсенчен нумай иртсе кайнă тата малалла та йышланса пыраççĕ.

Эпир Çурçĕр Африкăра тунă ĕçсем Италин фашистла государстви çине вăйлăн пырса тапăнма пире майсем памалла, çавăн пек вăйлăн тапăнассине Италин преступникла руководителĕсем шухăшлама та пултарайман пулĕ.

Çурçĕр Италин çар промышленноçĕн центрĕсем çине халех ĕнтĕ пысăк йывăрлăхсем тиенчĕç, çавăн пек йывăрлăхсене 1940 çулти хĕл вăхăтĕнче пирĕн нихăш хула та тӳссе курман. Тивĕçлĕ вăхăтра противника Тунисран пĕтĕмпех хăваласа кăларсан, — ку пирĕн тĕллев пулса тăрать,—пĕтĕм Кăнтăр Итали çине, унăн мĕнпур çар базисем çине, çар предприятисемпе ытти объекчĕсем çине, вĕсем ăçта вырнаççа тăнине пăхмасăрах, сывлăшран пĕр чарăнусăр тата пĕтерсе тăкмаллах пыра-пыра тапăнăпăр. Сăмах Италин 40 миллионлă халăхĕнче: ун патĕнче çакăн пек хăрушă япала пулса иртессипе вăл килĕшет-и е килĕшмест-и.

Вăрçа хутшăнма Итали халăхĕн нимĕнле интерес та пулман. Ун çине никам та тапăнман. Анчах Муссолини Франципе Англие хирĕç çапăçăва тухассинчен чарăнса тăраймарĕ. Муссолини хăйĕн империне пĕтерсе хучĕ. Пирĕн алла Италин 100 генералĕ ытла тата 300 пине яхăн салтакĕ тыткăна лекрĕç.

Африкăри ăнăçусем темĕнле хăвăрт пулса иртрĕç пулин те, вĕсем пирĕн шухăш-кăмăла вырăссем Хĕвелтухăç фронтĕнче тунă тĕлĕнмелле ăнăçусенчен сирсе яма пултараймаççĕ. Россия сыхласа хăварма тата усă курма пултарнă çавтери пысăк вăйран пĕтĕм тĕнче тĕлĕнет. Сталинградри никам çĕнтерейми оборона вăрçă ĕçне Сталин ертсе пынинчен килнĕ.

Пысăк результатсем панă çавтери вăйлă çапăçу хăйĕн чи хĕрӳллĕ тапхăрĕ патне çывхарса пырать. Çакна асра тытас пулать:, ку вăл вырăссен Шурă тинĕсрен Хура тинĕс таран тăсăлса выртакан пысăк фрончĕн пĕр пайĕ кăна, çав питех те пысăк фронтра вырăссем нумай пунктсенче атакăсем тăваççĕ. Вырăссен иккĕмĕш хĕлĕ Гитлер çарĕсене хăратать. Нимĕçсен 180 дивизийĕнчен чылайĕшĕ ĕнтĕ, хăйсем çухатусем тӳснине пула, бригада таран пĕчĕкленсе юлчĕç, мĕскĕн итальянецсен, румынсен тата венгерсен çарĕсем те хавшаса пĕтрĕç, çак çарсен халĕ совет çарĕсен вут-хĕмĕпе тăхлан çăмăрне тӳссе каяллла чакма тиврĕ».

Францири событисем пирки Черчилль çапла каланă: «Нумаях пулмасть пулнă событисем хыççăн, Кĕрешекен Франци текен идеалсем пĕтĕм Франци халăхĕ çине татăклă влияни парассине эпир шанса тăма пултаратпăр. Ултав чарша вĕ халĕ ĕнтĕ Франци халăхĕн куçне хуплаçа тăма пăрахрĕ тесе де Голль генерал каланипе эпĕ килĕшетĕп. Чăнах та, вăхăт ĕнтĕ».

Черчилль çакна асăрхаттарнă: «Халиччен пулса иртнĕ событисем нихăшĕ те вăрçă вăраха каяс çуккине тата пире йывăр та юнлă çапăçусем туса иртерме лекес çуккине шанма май памаççĕ».

Пулма пултарать,—тенĕ Черчилль, — Европăри вăрçă Азири вăрçăран хăвăртрах пĕтме пултарĕ. «Çакна шанса тăма пулать,—тенĕ Черчилль юлашкинчен,— хальхи вăрçа пĕтернĕ хыççăн эпир Европăри проблемăна чĕрĕк ĕмĕр каялла татса пама пултарнинчен чылай лайăхрах тата чылай çирĕпрех татса пама пултаратпăр».

Торонтори массăллă митингра Уилки тухса калани

ОТТАВА, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Торонтори чи пысăк залра массăллă митинг пулса иртнĕ, вăл митинг «Россиăна вăрçăра пулăшмалли фонд» валли пĕр миллион доллар пухас тĕлĕшпе пуçланнă кампани ячĕпе пулнă. Митингра 18 пин çын пулнă. Митингра Уенделл Уилки тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕн пуçламĕшĕнче Уилки «вырăссен паттăрлăхĕпе геройзмĕ çинчен, гитлерла çара хирĕç пĕлсе тата çине тăрса кĕрешсе вырăссем хăйсен государствин системи,—вăл пире килĕшет-и е килĕшмест-и,—вăйлă пулнине кăтартса пани çинчен, çав вăй руководительсенчен кăна мар, тата халăхран хăйĕнчен те тухни çинчен» каланă.

Союзниксен вăрçăри пĕрлехи тĕллевне палăртни питех те кирлĕ, тенĕ Уилки. Çакна туни пĕрлехи тăшмана хирĕç вăрçă туса пыма кăна мар, пĕрлешнĕ çĕршывсем вăрçă хыççăн туслăн пурăнмалла тума та кирлĕ. Союзниксен руководителĕсем хăшпĕр пĕрлехи тĕллевсене кăтартса пачĕç ĕнтĕ. Сталин çав программăна уççăн та тĕрĕссĕн каласа пачĕ.

Митинга пухăннисене Сталин юлташ 1942 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнчи докладра каланă заявленийе икĕ хут вуласа парса, Уилки çапла каланă: «Кирек хăш демократиллĕ çĕршывăн кирек хăш гражданинĕ те пулин Сталин каласа панă тĕллевсенче мĕн те пулин хирĕçлемелли тупать-и, тесе ыйтатăп эпĕ? Тĕллевсене çакăн пек палăртса,—тенĕ Уилки,—Черчилль е Рузвельт та çырма пултарнă, анчах та ĕç çапла пулса тухрĕ: пирĕн кĕрешӳри тĕллевсене шăпах Сталин палăртса пачĕ».

Сталин Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн кĕрешӳри программи çинчен каларĕ пулин те, тенĕ малалла Уилки, çапах та, çав программăна пĕтĕм тĕнче йышăнма пултарать. Уилки канадецсене вăрçă тĕллевĕсене Совет Союзĕ палăртса панине пĕтĕмпех шанса тăма чĕннĕ.

«Демократиллĕ çĕршывсенче, — тенĕ Уилки,—Россия пирки чылайĕшĕ шиклечĕç тата ăна шанмасчĕç, мĕншĕн тесен вырăссен экономикăри йĕрки çав çĕршывсен стройне пăсасран хăратчĕç». Çавăн пек шухăшсенчен тăрăхласа кулса, Уилки çапла каланă: «Россия пире хăратма та, астарса илĕртме те шутламасть, ăнăççăрлăхсене пула пирĕн экономика питех те хавшаса каймасан, çапла вара эпир вăйсăр та çирĕп мар пулса юлмасан, паллах, эпир хамăр йĕркене сыхласа хăваратпăр». Уилки малалла çапла каланă: «Совет халăхĕсем вăрçăра çавтери пысăк çухатусем тата çитĕнӳсем туни Сталинăн ырă кăмăлне питĕ уççăн кăтартса парать тата çак ырă кăмăл пурри пирки иккĕленекенсене ответ пани пулса тăрать».

Уилкин çак юлашки сăмахĕсене пуху тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ: «Африкăри фронт вырăссен фрончĕ пулса тăнă пекех, Сталинградпа Центральнăй фронт та пирĕн фронт пулса тăраççĕ, фронтсенче кĕрешекен вырăс халăхĕ вара паян пирĕн союзник пулса тăрать, ыран вăл пирĕн тус пулса тăма тивĕç».

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем наступлени туни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

США

«СОВЕТСЕМ НАСТУПЛЕНИ ТУМА ПИТĔ ЛАЙĂХ ХАТĔРЛЕННĔ»

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Совет войскисем малалла наступлени туса пыни çинчен пĕлтернисене Америкăра пысăк интереспа кĕтсе илеççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн обозревателĕ Болдуин хăйĕн статьинче Гитлер пуçарулăха çухатнине паллă тăвать.

«Вашингтон пост» хаçат советсем наступлени тума питĕ лайăх хатĕрленнĕ тесе паллă тăвать. Йывăр çухатусем пулнă пулин те, Хĕрлĕ Çар канма майсем шырамасть, тата вăйлăнрах кĕрешме тăрăшать. «Сталинградшăн пынă çапăçу Гитлерăн планĕсене пăсса ячĕ тата вăл çапăçусенче Германи çарĕн хăйĕн юнĕпе тӳлемелле пулчĕ».

Гитлер Сталинград çине наступлени тунипе усă курса, тет малалла хаçат, англичансемпе американецсем Çурçĕр Африкăра наступлени пуçласа яма май илчĕç.

«Нью-Йорк пост» хаçат Дороти Томпсон статьине пичетлесе кăларнă, вăл çапла çырать: нимĕçсен фашистла вăрăхурахĕсен тискер бандисем хĕснине Хĕрлĕ Çар кăна тӳссе ирттерме пултарнă çинчен Сталин каланисене совет войскисен Сталинград патĕнчи ăнăçăвĕсем çирĕплетсе пачĕç, тет.

Англия

«ÇАК НАСТУПЛЕНИ РОССИЙĂН ВĂЙ-ХĂВАТНЕ КĂТАРТСА ПАРАТЬ»

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат Сталинград районĕнче Хĕрлĕ Çар наступлени туни çинчен çырнă умстатьяра çакна паллă тăвать: наступлени тумалли плана пĕтĕмешпех пурнăçа кĕртсен, Германи поражени тӳссе чăн-чăн катастрофăна лекме пултарать, тет.

«Сталин çапла каларĕ,—тесе çырать малалла хаçат,—вырăссем Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен пырса çапнисен вăйне противника кăтартса парас вăхăт килсе çитет, терĕ. Акă ĕнтĕ пĕрремĕш хут пырса çапнă, çакă вăл ют çĕршывсенчи сăнавçăсем кĕтме пултарнинчен чылай хăвăртрах пулса иртрĕ, паллах, нимĕçсем хăйсем те вĕсене çакăн пек хăвăрт пырса çапассине кĕтмен».

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат Хĕрлĕ Çар наступлени туса пыни союзниксен войскисем Çурçĕр Африкăра ăнăçлăн кĕрешнипе пĕр вăхăтра пулса иртнине паллă тăвать. Чи пахи вăл,—тесе çырать хаçат,—çакăнта пулать: «Вырăссем 18 уйăх хушши нихăçанхи пек мар вăйлăн çапăçнă хыççăн, çавтери анлă наступлени пуçлама пултарчĕç. Çак наступлени—Российăн вăй-хăватне кăтартса паракан пулать. Çак наступленире артиллери, бронетанковăй войскăсем тата авиаци хăйсен вăйне кăтартса параççĕ. Çак наступлени, çавăн пекех, тата Хĕрлĕ Çар командирĕсем пултарулăхне уççăн кăтартса парать. Халĕ нимĕçсен питех те хĕрӳллĕ вăхăта тӳссе ирттерме лекет».

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар чаçĕсем центральнăй фронтра наступлени туни çинчен пĕлтернине Англире пысăк интереспа кĕтсе илнĕ. Мускавра Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвне радиопа панă хыççăн темиçе минутăранах çав пĕлтерĕве Лондонри радио васкавлăн пĕлтернĕ. Вырсарникун тухнă хаçатсем Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвне чи курăнмалла вырăнсенче пичетлесе кăларнă.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернинче çапла каланă: Тунисра тĕнĕл держависен войскисем оборонăллă çапăçусем кăна тунă. Ăнăççăр контратака тунă хыççăн, противникăн чаçĕсем хăйсен оборона линийĕ патне чакнă. Çав линисем Туниспа Бизерта çывăхĕнче. Ултă кун хушши союзниксем Италипе Германин Матер патĕнчи позицийĕсене атакăланă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ТУРИН ÇИНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Англири авиаци министерствин коммюникинче кăтартса панă тăрăх, ноябрĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Туринри объектсем çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапăннă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Турин çине вĕçсе пынă вăхăтра Англи авиацийĕ 3,5 тонна ытла туртакан çĕнĕ йышши бомбăсемпе чи малтанхи хут усă курнă. Туринри объектсем çине шултăра фугаснăй бомбăсем нумай пăрахнă тата 100 пин ытла зажигательнăй бомбăсем пăрахнă.

Туринран 300 пине яхăн çынна эвакуацилесе урăх çĕре куçарнă, çакă вăл хулари халăхăн çуррине яхăн пулать.

Пĕлтерӳ

Декабрĕн 2-мĕшĕнче 8 сехетре каçхине ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн парткабинетĕнчи лекцисен залĕнче Сталин юлташ доклачĕсемпе приказĕсене вĕренекенсене пулăшас майпа лекци пулать. Лекци теми:

«Европăри иккĕмĕш фронт çинчен тăракан ыйту тата гитлерла Германие тата унпа пĕркаварлисене хирĕç СССР, Англия, США тунă боевой союз».

Лекцие Родин юлташ вулать.

ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашторгу требуются на работу: бухгалтер-ревизор и юрисконсульт. Оплата по соглашению.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, № 11, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11264 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф б. 58 84 п.